**Петĕр Хусанкай умĕнче пуçăма тайса**

Çамрăклах хисеплеттĕм сана,
Ас илмешкĕн кирлех-ши ăна.
Аван мар пек куçран калама - çунат патăн эс ман чунăма.

* * *

Ĕмĕрсен ĕмĕтне
Пурнăçа эс кĕртен.
Эсĕ сывă чухне
Вăйли çуккă пиртен!
1960

**Эп илтетĕп**

Эп илтетĕп ялан Хусанкай сассине,
Пурнăçа чĕререн юратма чĕннине.
Эп илтетĕп çаплах Хусанкай сассине,
Халăха ĕçпеле пулăшма чĕннине.
Эп илтетĕп ялан Хусанкай сассине,
Вăл тăван чĕлхене пуç тайма чĕннине.
Эп илтетĕп ялан Хусанкай сассине,
Çирĕп миршĕн хастар кĕрешме чĕннине.
Эп илтетĕп çаплах Хусанкай сассине,
Çĕршыва чун-вартан юратма чĕннине!
1987

**Хусанкайпа пĕрле чухне**

Çӳренĕ, кайнă ялсене
Хусанкайпа пĕрле чухне.

Ялан асра ун сăввисем,
Асрах илемлĕ юррисем.

Манас çуках эп ĕмĕрне
Тăван поэзин Улăпне!

*1987*

## Тăван поэтăмăр Хусанкай

Хусанкай хăйĕн пĕтĕм вăйне,
Çăлтăр пек çуталан ăс-халне,
Пархатарлă хĕрӳ пурнăçне
Парнелерĕ Чăваш халăхне.

Хусанкай тăван халăх ятне,
Илертӳллĕ чĕлхе илемне,
Ун сăваплă сӳнми хăватне
Илсе тухрĕ тенчемĕр умне.

Хусанкай пиллесе хăварни,
Унăн хаклă асамлă парни
Нихăçан тухас çук асăмран -
Тавах уншăн ăна чун-вартан!

Хусанкай чунĕпе, ăсĕпе,
Янаравлă сăвви-юррипе
Юлчĕ пирĕн пин-пин чĕрере,
Юлчĕ пирĕн асра ĕмĕре!